31-4

ПИОНЕРСЕН ПИПЛИОТТЕКĔ



Л. АГАКОВ

# ЙУЛАШКИ ЙУМАХ

СССР-ти Халăхĕсен Тĕп
Истаттĕлстви ★ Мускав ★ 1931

ПИОНЕРСЕН ПИПЛИОТТЕКӖ

Л. АГАКОВ

# ЙУЛАШКИ ЙУМАХ

(Аҫа-пӑҫа калавӗсем)

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлевви
Мускав * 1931

Главлит № А 85392 Заказ № 3506 Тираж 5000 экз.

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва,
Шлюзовая набережная, 10.

## ПУЛАШРĂМĂР.

...Паљља маҥа ђĕнме анкартине пыђĕ. Епĕр, анђахрах кăнтăрлахи апат çисе, ĕçлеме тытăннăђђĕ вăл пынă ђухне.

— Йăван, аҭа шкула,—терĕ вăл мана.—Ентри пиђђе ђĕнет. Пионерсене пурне те пухма хушрĕ. Пуху пулаҭ.

— Мĕн пухăвĕсем туса аппаланатăр ĕç вăхăтĕнђе?—ыйтрĕ унтан анне.

— Ахаљрен пухмаççĕ пуљ, ĕç пур ĕнтĕ,—татса хуђĕ Паљља.

— Е-е, тем ĕçĕ пулмалла сирĕн, вăхăта сайа йаратăр çав...

Паљља анне çине ђăр-р... пăхрĕ.

— Интереснă калаçатăн. Апла... есĕ пионерсене ним вырăнне те хумастăн витнă?

Анне кăштах çиленнĕ пек пулђĕ пулас.

— Мĕн вырăнне хумалла сире. Ĕç тăватăр пулсан—татахђĕ... Пустуй...

Анђах Паљља ăна каласа пĕтерме памарĕ.

— Есĕ, инке, манпа ан йатлаç,—терĕ вăл, мăн çын пек аллисене кайалла тытса тăрса.—Мана хушнă та, епĕ çӳретĕп... Конешнă, Йăвана пухăва йамасан та пултаратăн, мĕншĕн тесен есĕ тĕттĕм хĕрарăм...

Итемĕн тепĕр вĕçĕнђе тăракан атте, кăна илтсен, кулсах йаҭђĕ.

— А-ах, çутта тухни,—терĕ вăл Паљљана.—Шăхлиђă!

Унтан ман çине пăхрĕ те, купаланса выртакан кĕлтесем çине кăтартрĕ.

— Çавсене капан патне çĕклесе кайса пăрах та—кайăх...

— Анђах ытла нумай ан çӳре,—хушрĕ анне,— атту есĕр аçупа иксĕр те пĕр тухса кайсан киле тавăрăнма пĕлместĕр...

— Йурĕ, йурĕ,—терĕм те епĕ, кĕлтесене капан патнелле куçарма тытăнтăм. Паљђа та пĕр çирĕм-вăтăр кĕлте çĕклесе пађĕ те, епĕр унпа иксĕмĕр анкартинђен ђасах тухса кайрăмăр.

— Мĕн пухăвĕ пулĕ-ши?—тесе ыйтрăм Паљђаран анкартинђен тухсанах.—Есĕ ђăнах пĕлместĕн-и?

— Пĕлместĕп çав... Ентри пиђђе нимĕн те каламарĕ. Хуларан такам килнине илтнĕђђĕ те...

Шкула çитсе кĕриђђен те пĕлеймерĕм пире шкула мĕншĕн пухнине.

Епĕр çитне çĕре унта пирĕн йулташсем ђылай пухăннă. Мĕтри, Ваңук, Кеорки, Тарас... Шакăлтатса кăна лараççĕ.

Алăкран кĕрсе тăтăм та, манăн пуçа тăруках алхасас шухăш кĕрсе кайрĕ пулмалла. Нимĕн шухăшламасăр-тумасăрах кăшкăрса йатăм:

— Мĕн пухăвĕ тумалла пулнă çак ĕç вăхăтĕнђе? Ĕççĕр аптранă штолĕ вĕсем! Е?

Çав самантрах тăкăртаттарса ташласа илтĕм... Ађасем темшĕн лахăлтатса кулса йађĕç.

Темрен—сылтăмалла пăхрăм та, ђĕлхене нăтăрт! çыртрăм.

Уђиттĕл пӳлĕмĕн алăкĕнђе хĕрлĕ тутăрлă, сăран пиншаклă, аллине сăран портфĕл тытнă хĕрарăм тăрат. Ман çине пăхнă та—кулат...

— Камсем вĕсем „ĕççĕр аптăранисем“? — терĕ...

Нимӗн те ҫӗнеймерӗм. Калама та ҫук хытӑ хӗрелсе кайрӑм пулмалла хам, пӗтӗм пит-куҫ пӗҫерсе кайрӗ. Аҫасенҫен тахӑшӗ, ҫитменнине, хыҫалтан хыттӑн кӑшкӑрҫӗ:

— Сире калаť!

Хӗрарӑм ман пата утса пыҫӗ.

— Пионер-и есӗ?

— Пионер, пионер!—терӗҫ маншӑн хыҫалта лараканнисем. Хам ҫӳлелле пӑхаймастӑп. Йураť, Паҫҫа пырса тӑҫӗ. (Вӑл йаланах ман хута кӗрет ҫавнашкал).

— Пионер вӑл... Ма вара?

— Ахалех... Ӗҫрен уйрӑлса килнӗ пулмалла та вӑл...

— Тӗрӗс. Ӗҫ вӑхӑҫӗ вӗт хаҫ. Ӑна амӑшӗ пухӑва та йарасшӑн марҫҫӗ, аран-аран илсе килкелерӗм...

... Уҫиттӗл пӳлӗмӗнҫен Ентри пиҫҫе тухрӗ, тӳрех сӗтел патнелле пыҫӗ. Хӗрарӑм та ун хыҫҫӑн утрӗ. Ҫӗре лӑштах кайрӗ. Йапӑр-йапӑр ҫи хыҫалти парттӑ ҫине кайса лартӑм.

Малтанласа пӗртак иккӗнленкелерӗм. Ну, ку ӗңтӗ ман ҫинҫен Ентри пиҫҫене каласа кӑтартатех, тетӗп. Ентри пиҫҫе—пирӗн вошаттӑй—хайар мар та, ҫапах йӗркесӗрленнине йуратмасť. Мӗнле те пулин сӑтӑр тусан вара хӑйӗн патне ҫӗнсе илет те кала-аť пӗр тапхӑр. Апла капла тума йурамасť, пионерсен примерлӑ пулмалла... Сӑмахӗсем пушӑ пек пырса тивеҫҫӗ.

Ҫылайҫҫен пӑхса лартӑм хӗрарӑм ҫине. Каламасť-и ку Ентри пиҫҫене хӑлхаран мӗн те пулин? Каласан вара—ман ҫинҫенех калаť ӗнтӗ!

Пӗрре шутлатӑп та—калаť пулӗ, тетӗп. Тепре шутлатӑп та—каламаст пулӗ, тетӗп. Кам пӗлет ӑна, тен вӑл пӗлтӗр аҫасене хӗненӗшӗн шкултан

кăларса йанă Маринă Петровнă учиттелнитсă йевĕрлĕскер. Чăн та, Маринă Петровнă ватăччĕ, ку çамрăк, çапах та... Хулари çынсене пĕлместĕп, тен...

Темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхрăм. Ентри пиччe, сĕтел хушшинче лараканскер, тăрса сĕтел çине кăранташпа шаккасан тин лăплантăм.

— Пайан сире, ачасем,—терĕ Ентри пичче, кăранташĕпе сĕтел çине шаккаса,— питĕ хăвăрт пухмалла пулчĕ...

— Хăвăрт çав,—терĕ иккĕмĕш парттă çинче лаpакан Пальльа.—Епĕ шалт хăшкăлтăм вĕт чупса...

Ентри пичче Пальльа сăмахĕсене илтмĕш пулса малалла калама тытăнчĕ.

— Çула май пирĕн йала пайан респуплĕкри пионерсен пўровĕн члeнĕ Ивановă йулташ кĕнĕ. Вăл пĕртакках сирĕнпе калаçасшăн пулчĕ, çавăнпа та епĕ сире пухтартăм...

Епĕ хама хам пĕçĕрен çăтăр-рт? чĕпĕтсе илтĕм. „Авă кам аллине ленкнĕ епĕ! Ну, пионертан кăларса ывăтаť ĕнтĕ ку мана..."

— Чипер итлесе ларăр еппин,—терĕ те Ентри пичче, ларчĕ.

Класра шăп пулчĕ...

Епĕр Шупашкартан килнĕ çынсем каланине нихăçан та илтмен. Пайан пĕрремĕш хут илтетпĕр. Çавăнпа та пурте ун çине темĕскер çине пăхнă пекех пăхаççĕ.

Вăл сĕтел умне тухса тăчĕ те, хуллен ĕсĕрсе илчĕ. Унтан пуçларĕ.

Пирĕн йал хыçĕнче Айхăш йатлă шыв пур. Тăп-тăрă, таса шыв. Калама та çук уççăн шăнкăртатса вырташ вăл...

Çак Шупашкартан килнĕ хĕрарăм калани мана çавăн пек туйăнса кайрĕ. Пĕр тытăнмасăр уçă сасăпа, лăпкăн ăнланмалла калаť...

„Ађасем! Пайан есĕр килсенђе пурте еçлеттĕрђђĕ пулмалла. Сире ĕçрен уйăрса килмелле пулђĕ. Анђах епĕ те сирĕнпе ĕç çинђенех каласасшăн...

„Ентри йулташ мана сирĕн кăçалхи ĕçĕрсем çинђен каласа кăтартрĕ. Есĕр кăçал пит аван ĕçленĕ. Пур çĕрте те сирĕн пек ĕçлесесен пит аван пулмалла...

„Хут пĕлменнисене ђылай вĕрентнĕ, ратио лартнă, шкул картинђе сăнавлă пахђа тунă, тата ытти те.

„Пĕтĕм Сойусри пионерсен пĕрремĕш слођĕн наккасĕсене есĕр пурнăçа кĕртсех пыратăр. Есĕр çĕнĕ пурнăç тăвасшăн ĕçлетĕр...

„Халĕ, ађасем, пирĕн ума тата тепĕр сатађ тухса тăђĕ. Вăл—тырпул хатĕрлес кампанире ĕçлесси. Тыръ хапрăк-савăтсенђе рапођђисем вађђи кирлĕ. Тырă хула вађђи кирлĕ...

„Хула йал вађђи тĕрлĕрен таварсем, машинăсем парать. Йалăн хула вађђи тырă парас пулать.

„Сирĕн, ађасем, кун çинђен йалти хресђенсене тĕплĕн ăнлантарас пулать. Пуринђен малтан аçуаннўсене ăнлантармалла. Йал хушшинђе акиттатси пуçласа йамалла...

„Акиттатсине çтена хаçаđĕ урлă, тата тĕрлĕрен плаккатсемпе лосăнксем çырса çапнипе туса пымалла. Килтисене сăмахпа ăнлантармалла...

„Тырă вађђи михĕсем кирлĕ. Сирĕн—михĕсем пухма тăрăшас пулать...

„Йалти кулаксем пире йаланах ђăрмантарасшăн тăрăшаççĕ. Ку ĕçре те вĕсем ђăрмантарма тăрăшĕç. Вĕсем патшалăха тырă парассине хирĕç тăраççĕ. Вĕсем хăйсен ытлашши тыррисене пытараççĕ. Тырă пытарнисемпе пирĕн пур майсемпе

те кĕрешмелле. Ун пеккине сиссен—тӳрех йалсоветне пĕлтермелле...“

...Нумай каларĕ вăл. Анђах, пит аван каланăшăн пулас, кăшт та ывăнтармарĕ итлесе ларни. Унтан хăрама мар, епĕ ăна аннене йуратнă пек йуратакан пулса кайрăм...

— Çапла, ађасем,—терĕ вăл йулашкинђен,— çак кампанире ђăн-ђăн пĕђĕк пољшевиксем пулса ĕçлĕр ĕнтĕ. Тырпул хатĕрлемелли плана пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн ĕçлени вăл пилĕк çуллăх плана хăвăртрах пурнăçа кĕртессишĕн ĕçлени пулаť. Çавна ан манăр. Влатимир Илйиђ Ленин: „Тырпулшăн кĕрешни—сотсиалисăмшăн кĕрешни пулаť“, тенĕ...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

— Тырпул хатĕрлес кампанире хытă тăрăшса ĕçлес,—тесе йышăнтăмăр епĕр.—Йалсовеђĕ çуçумĕнђи тырпул хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеме тунă комиççине пур майсемпе те пулăшас!

Тепĕр кунне прикатăсем турăмăр. Михĕсем пухакан прикатă, лосăнксем çыракан прикатă, çтена хаçађĕ кăларакан прикатă.

Пире Паљљапа иксĕмĕре Ентри пиђђе лосăнксем çыракан прикатăна çырђĕ.

— Есĕр карттинсем аван тăватăр, сирĕн лосăнксем çырас пулаť,—терĕ.—Есĕ Йăван, асли пулатăн,—терĕ мана.

Çавăнтах пире хут таврашĕсене тыттарса йађĕ.

Киле таврăннă ђухне Паљља мана çапла каларĕ:

— Ну, тавай, как çлетăвай тăватпăр. Ытти прикатăсенђен иртерер-ха пĕрре.

— Йурĕ,—терĕм епĕ.

Килте анне каçхи апат пĕçерет мĕн. Епĕ хут çĕклесе пынине курсан, вăл темĕскер мăкăртатса илҫĕ.

— Мĕн терĕн, анне?—ыйтрăм епĕ.

— Нимĕн те мар... Ĕçсĕр аптраса çуретĕр аçупа иксĕр те... Çав хут тавраш кăна сирĕн пĕтĕм ĕçӳсем те...

— Çук анне, ĕçсĕр çӳремен пайан епĕ, ĕçпе çӳренĕ.., Пустуй йатлаçатăн,—терĕм.

— Мĕн ĕçпе?

— А вăт итле... Сана тутăр-саппун ваҙҙи çитсă кирлĕ-и?

— Кирлĕ. Мĕн вара?

— Атте плук илесшĕн-и?

— Илесшĕн.

Санăн çĕнĕ ҙукун-куршук илмелле-и?

— Илмелле, ну. Вара мĕн?

Анне манăн тарăхма пуçларĕ. Епĕ ăна татах çавнашкал ыйтусем парасшăнҙҙĕ, анҙах вăл кăшкăрса пăрахрĕ.

— Мĕн есĕ ман пуçа çавăратăн? Мĕн лĕпĕртететĕн?

Епĕ, хам çак самантра аннерен ытларах пĕлнине асра тытса, ăна ăнлантарса пама пуçларăм.

— Çав мĕн пур йапаласене ăçта тăваççĕ?

— Ара, епĕ ăçтан пĕлем...

— А епĕ пĕлетĕп!

— Мĕн пĕлетĕн?

— Вăл йапаласене пурне те хулари савăтсенҙе тăваççĕ.

— Вара мĕн:

— Вăл савăтсенҙе рапоҙҙисем ĕçлеççĕ...

— Вара мĕн?

— Рапоҙҙисем çимесĕр пурăнма пултараймаççĕ, çавăнпа та хресҙенĕн рапоҙҙисене тыра

парас пулаӗ. Рапоҫҫисем хресҫенсене ваҫҫи тӗрлӗ машшинӑсем тӑваҫҫӗ... Ҫавӑн ҫинҫен епӗр ӗнер те, пайан та калаҫнӑ.

— Есӗр калаҫниҫе мӗн усси пулҫӗ-ши вара?

— Усси пулаӗ. Пирӗн ҫак сана каласа кӑтартни ҫинҫен пурне те ӑнлантармалла.

— Мӗнле?

— Хут ҫине ҫырса...

Анне текех шарламарӗ. Ӑнланҫӗ пулмалла. Анҫах ҫав вӑхӑтра мана хулпуҫҫинҫен такам лапкаса илҫӗ. Ҫавӑрӑнса пӑхрӑм—атте тӑраӗ. Епӗ, аннепе тавлашкаласа тӑнипе, вӑл тултан пӳрте кӗнине те сисмен...

—Тӗрӗс, тӗрӗс калатӑн,—терӗ вӑл.

— Мӗн тӗрӗс?

— Есӗ аннӳне калани. Мӗн-мӗн йышӑнтӑр-ха есӗр?

— Йалсовеҫӗ ҫумӗнҫе тырпул хатӗрлес тӗлӗшпе ӗҫлекен комиҫҫине пулӑшас терӗмӗр,—терӗм епӗ.

— Ҫӑнах-и?

— Ҫӑнах...

— Ее-е, аҫам,—терӗ атте,—апла иксӗмӗр те...

— Мӗн?

— Пӗр ӗҫрех.

— Мӗнле?

— Мана йалсовеҫӗ тырпул хатӗрлес ӗҫе пулӑшакан комиҫҫине уйӑрнӑ.

... Апат ҫисенех, аннене сӗтеле шӑлса тасаттартӑм. Тасаттартӑм та, тытӑнтӑм ӗҫлеме.

Атте хӑйӗн папкине ҫӗклесе таҫта тухса кайрӗ. Анне кутнӗк ҫине канма выртрӗ те, ҫасах хӑрлаттарма тытӑнҫӗ. Тапалантӑм вара пӗр тапхӑр.

Пӗр саспаллине те виҫмесӗр тумарӑм. Малтан кӑранташпа хуллен ҫырса тухрӑм, унтан виҫе

тёслё краскăпа илемлетсе пытăм. Ђылайђђен лартăм тăрмашса. Тапхăр-тапхăр хамăн çамка çине вёри тар тапса тухаť.

Ёçлерём-ёçлерём те, сехет çине пăхса илтём. Вăхăт вунпёр патнелле сулăннă. Епё ку вăхăтђен нихăçан та ларман.

— Çывăрас пулаť,—текелесе йулашки саспаллисене сăрлама тытăнтăм.

...Çак вăхăтра, сасартăк, пирён урам алăкё уçăлса хупăннă сасă илтёнђё. Такам пусма картлашкисем тăрăх пит çăмăллăн ђупса хăпарђё.

— Кам-ши ку? Атте кунашкал ђупас çук...

Кёç—пўрт алăкё уçăлђё те, пўрте... Паљља кёрсе тăђё. Аллине туйа пек ђёркенё хут тытнă.

— Епё пётертём?—терё ман паталла пырса.

— Лосăнксене çырса пётертём...

— Епё те пётеретёп ёнтё, сăрламанни икё саспалли çеç йулђё...

Манăнне курсан Паљља хăйён лосăнкёсене салатса кăтартрё.

— Мёнле пек?

— Аптрамаççё. Манăн тата?

— Санăн тата аван... Ну, çырса пётер ђасрах!

— Ма ытла васкас-ха?

— Кёçёрех Ентри пиђђене кайса кăтартатпăр. Мён калё вăл...

Ку шухăш мана килёшрё. Хавасланса хайрăм. Ђăнах, Ентри пиђђене кайса кăтартас, мён калё-ши вăл? Мухтё-ши, йе... хурлё?

...Пёр вунă минутран туса та çитертём. Ура сырса аппаланас килменнипе кăмака çинђен аннен кив çăматтине туртса антарса тăхăнтăм та, лосăнксене ђёркерём.

— Ну, кайăпăр!

— Аťа.

Анђах алăк урлă пĕр утăм йăрса пуссаттăм, анне пуçне çĕклерĕ те, кăшкăрса тăкрĕ пире:

— Ăçта лăнђатăр çĕр хута? Йăван, ниçта та ан кайнă пултăр!...

Ман вырăна Паљђа калаçма тытăнђĕ.

— Тархасшăн ђарăн, инке,—терĕ вăл анне патнеллех пырса.—Пирĕн ĕç пур...

— Ес йалан сĕтĕрсе çӳретĕн ăна!

— Пĕртте сĕтĕрместĕп... Анђах пирĕн пайан çак хутсене Ентри пиђђе патне леçсе килмелле.

— Ыран ирпе леçме йурамасť-и,—çаплах ђарăнмасť анне.

Ну, ку мана такки йамастех ĕнтĕ, тетĕп. Пĕтрĕм вара, Паљђа пĕђђенех кайаť, пĕђђенех мухтанаť....

Анђах Паљђа çăлђĕ. (Ђăннипе каласан, Паљђа вăл мана пурнăçра пит нумай усă кӳнĕ. Мĕн ђухлĕ çăлнă вăл мана çакнашкал ђухне!). Тапратрĕ вăл аннене тыттарма...

— Ыран ирпе теме аван та вăл, инке, ку хуђĕсене Ентри пиђђе ирех хулана илсе кайаťçке... (Манăн ђутах кулă пĕрхĕнсе тухса кайађђĕ. Çав тери тыттараť).

— Çавăнпа кĕçĕрех леçмелле.. Çавăнпа есĕ, тархасшăн, ан йатлаç...

Анне пирĕн çине пăхса тăђĕ-тăђĕ те—аллипе сулђĕ.

— Ну, кайăрах еппин! Ытла нумайах ан çӳрĕр туљкка.

— Йурĕ, йурĕ.

Тухрăмăр та—ђупрăмăр.

Урамра пăђ тĕттĕм. Ик-виç утăмра тăракан çынна та паллайас çук. Такăна-такăна ђупатпăр. Паљђан ури пĕрре темле шăтăка кĕрсе кайнă та, вăл кĕмсĕрт! туса тăсăлса анђĕ...

..Ентри пиҫҫе анҫахрах ҫывăрма хатĕрленнĕ мĕн. Епĕр ҫитсе кĕрсен, тĕлĕннипе ҫăварне ланк! карса парахрĕ.

— Мĕн, мĕн пулнă аҫасем?—тесе ҫупса пыҫĕ вăл пире хирĕҫ алăк патнелле.

— Кăтартма,—терĕ Паҫҫа.—Ҫырса пĕтертĕмĕр...

— Ҫăнах-и? Но-о?.. Ех, маттур ҫав манăн аҫасем. Тавайăр еппин, кăтартăр. А еп темскер пулнă тесе...

Пирĕн лосăнксене сĕтел ҫине пĕререн-пĕререн сӳтсе хурсах пăхса тухрĕ. Унтан тăваттăшне те ҫтена ҫумне тирсе ҫакрĕ...

— Аван! Молотсы, аҫасем. Нуккă, вулар пĕрле... тĕрĕс ҫырнă-и?

Тытăнтăмăр вулама.

— Хула йал ваҫҫи машшинăсем парать,—йалăн хула ваҫҫи тырă памалла...

— Пĕр пĕрҫĕ тырă та ҫпеккуҫант аллине ан лектĕр...

— Кулака пĕр кĕренкке тырă та пытарттарар мар...

— Йалпа хула ҫыхăнăвне ҫирĕплетер...

Лосăнксенҫе пĕр йăнăш та пулман. Паҫҫапа иккĕн те калама ҫук савăнса кайрăмăр ҫав... Тĕрĕсех ҫырнă! Пĕр йăнăшсăр!

Ентри пиҫҫепе ыран мĕн-мĕн тăвасси ҫинҫен кăшт калаҫкаласа лартăмăр та, киле кайма тухрăмăр.

Урамра паҫăрхинҫен те тĕттĕмленнĕ. Кăштах ҫил тухнă та, урамри йăвăҫсем темле киҫемĕн кашлаҫҫĕ... Ҫăлтăр-мĕн курăнмасть, пĕтĕм ҫанталăка хура пĕлĕтсем хупланă...

Васкамасăр, акăш-макăш калаçкаласа Пӳремет Йаккувĕн пӳрт кĕтессине çитремĕр. Паљља, сасартăк, темшĕн пат! ђарăнса тăђĕ.

— Йăван...

— Мĕн?

— Ес хăрамастăн-и?

— Мĕнрен?

— Ара, кирĕк мĕнрен...

Мĕн хăйамађĕ пулђĕ кăна, тетĕп. Тĕлĕнтĕм ађаран. Хăй пĕрмай Пӳремет Йаккувĕн пӳрђĕ çумĕпе кĕрсе кайакан пралукалла пăхат. Тăђĕ-тăђĕ те, каллех:

— Хăрамастăн-и?—терĕ. Еп тарăхма пуçларăм.

— Хăрамастни, хăрамастни... Ну, хăрамастăп! Мĕн вара?

— Нимрен те-и?

— Нимрен те!..

Каллех пĕр тапхăр шарламасăр тăђĕ. Унтан мана çанăран çавăрса тытрĕ. Сисрĕм—ман ђĕре хыттăн тапма пуçларĕ.

— Аťа çырмапа!—терĕ Паљља...

Ку сăмахсем мана çӳçентерсех илђĕç. Епĕ кăна кĕтменђђĕ...

„Çырмапа.., Çурçĕр çитнĕ ђух"...

Ђăн та ĕнтĕ, Паљља питĕ хăрушă ĕç пуçласа йађĕ. Ахаљ пулсан татах та нимĕн те мар та, ку çырма çинђен йалта тĕрлĕ халапсем çӳреççĕ. Унта пĕлтĕр кĕркунне йалта сăмакункăпа суттуса пурăннă Йалампи карђăк çакăнса вилнĕ... Унта... унта тата... ĕлĕк, сĕм вăрман пулнă ђух, арçурисен йăви пулнă теççĕ. Хаљ те вĕсем çĕрле тухса ђупаççĕ, теççĕ,..

...Паљља мана каллех çанăран тытса туртрĕ.

— Кайăпăр-и?

Епĕ шарламарăм. Паљља мана йĕкĕлтеме тытăнђĕ.



Паљља ман çуммарах йăпшăнса аллипе çырма тăрăх тăвалла кăтартрĕ.

— Хăрамастăп терĕнĕç? Хăраса ӳкрĕним тата? Е? Кала-ха: хăраса ӳкрĕн-и, Йăван? Хăрарăн пулсан—ан пыр, пѐҫҫенех кайатăп...

А-ах, тарăхса кайрăм Паљља çине. Пĕлетĕп, хăй те хăрат, анҫах хăй хăранине кăтартасшăн мăр вăл. Мана йури йĕкĕлтет...

— Аҭа,—персе йатăм епĕ сасартăк.

Каларăм та—татах хăраса кайрăм...

— Ну, аҭа еппин,—терĕ Паљља.

— Аҭа,—терĕм епĕ те, шăла çыртсах. Хамăн ҫĕре сиксе тухас пек тапаҭ...

Утрăмăр. Кăшт кайсанах Паљља ман çумалла лăпҫăнма пуçларĕ. Епĕ—ун çумнелле.

Акă ĕнтĕ Матви муҫисен кĕлеҫĕ, акă Муççасен мунҫи... Пралук ансăрлансах пыраҭ. Тĕттĕм... Ҫĕре тапаҭ. Сывлăш та темĕнле йăвăррăн тухаҭ. Иксĕмĕр те пĕр сăмах та ҫĕнместпĕр...

Сăрта çитрĕмĕр. Çырма тĕпнелле антăмăр. Акă, пĕлтĕр çуркунне Йалампи карҫăк çакăнса вилнĕ йăмра. Ой, ой хăрушă...

Тĕттĕм. Киҫем...

Сасартăк, умма темĕскер сиксе тухсан, мĕн тăвас? Ах, хăçан çырман леш йенне каçăпăр-ши?

...Шăп çырма тĕпне анса çитес ҫух, Паљља мана сасартăк хулран ҫăмăртаса тытрĕ те:

— Йăван,—терĕ шăппăн.

Иксĕмĕр те ҫарăнтăмăр. Ну, мĕн те пулин пулаҭ! —терĕм хам ăшăмра.

— Йăван... Пăх-ха... Пăх-ха...

Манăн сăмах пыра ларҫĕ. Епĕ нимĕн те калаймарăм. Паљља ман çуммарах йăпшăнса аллипе çырма тăрăх тăвалла кăтартрĕ.

— Куратни?

— М... мĕн?

—Ав, çутă курăнаҭ...

Тилмĕререх пăхрăм. Ђăнах, ытла инçех те мар, тура, çип пек ансăр хăйă çутти палăрат. Кăшт тăрсан çутă çухалђĕ. Унтан каллех курăнакан пулђĕ...

Ман çамка çине сивĕ тар тапса тухса кайрĕ. Ђĕлхе çыхланђĕ—калаçаймастăп.

— Мĕн вăл?—терĕ Паљђа ђылайах тăрсан, темле шала кайнă сасăпа.

— Тем...

...Калама пултараймастăп хаљ, тем вăхăт тăнă епĕр Паљђапа иккĕн вăл çутă çине пăхса. Çакна çеç астăватăп: Паљђа мана алăран туртрĕ.

— Аťа, Йăван... Мĕн пулаť—мĕн килет. Кайса пăхар çавăнта...

Епĕ сăмах та ђĕнмерĕм, хирĕçмерĕм те. Паљђа хыççăн çырма тĕпне анса, çутă куранна çĕрелле утрăм.

Çутă инçех те мар йулсан, Паљђа ман паталла çавăрăнса тăрса, хуллен:

— Ан хăра, Йăван, — терĕ. — Ку çутă Пуйан Љђава мунђинђен курăнаť.

Манăн хулпуççи çинђен темĕн пысăккăшĕ ђул йăванса аннăн туйăнђĕ. Еппин, ку питех те хăрушă йапала мар.

— Çапах та,—терĕм Паљђапа танлашса,—мĕн çутти пулма пултараť вăл çак вăхăтра?

— Пĕлместĕп...

— Мунђа кĕреççĕ-ши?

—Темĕн... Аťа, хуллен кайса пăхатпăр...

Çырма тĕпĕпе тепĕр вунă ђалăш кайсан йалта аватансем алтса йађĕç. Çурçĕр çитнĕ.

Шухăшласан хăрамалла... Çурçĕр! Шăп çурçĕрте кĕрхи тĕттĕм каçпа епĕр, икĕ пĕђĕк ађа, пĕри вунвиççĕре, тепĕри вунтăваттăра, хăрушă çырма тĕпĕнђе ђаваланатпăр...

Акă ĕнтĕ—Паљља тăватă ураланса Пуйан Љава мунђи патнелле хăпарма тапратрĕ. Епĕ—ун хыççăн. Хуллен, кушаксем пек йăпшăнса хăпаратпăр. Алла темиçе хуђтен пиçен тирсе илђĕ. Урасем шăваççĕ. Халĕ ĕнтĕ манăн хăрани-туни иртсе кайрĕ. Пĕтĕм вăйран çӳлелле хăпарма тăрмашатăп.

...Çитрĕмĕр. Тăвалла хăвăрт хăпарнипе иксĕмĕр те хашкакан пулнă, анђах йăвăррăн сывламастпăр. Кам пĕлет: мунђара темле çынсем пулĕ те, сиссен—тем курăн!

Çутă хăма çурăкĕ витĕр курăннă. Паљља тӳрех çав çурăкран кармашса пăхма тытăнђĕ. Пăхрĕ-пăхрĕ—те куклендĕ. Вара епĕ пăхма пӳçларăм.

Тăруках епĕ нимĕн те кураймарăм. Унтан... Вăт тăк тамаша-а-а!.. Сирĕн шутпа мĕн курма пултарнă епĕ, йулташсем?

...Мунђа çелнĕкĕн урайне тăпăлтарса кăларнă та унта талкишĕпех шăтăк алтнă. Шăтăкра Пуйан Љава тăрат. Çтена çумне пĕђĕкçеç лампă çакса йанă, Мунђа алăкĕнђен Пуйан Љава ывăлĕн пуçĕ курăнђĕ. Унтан вăл пĕр пысăк михĕ çĕклесе ашшĕне тыттарђĕ. Пуйан Љава вăл миххе хăй тăракан шăтăка хуђĕ. Унтан ывăлĕ каллех тепĕр михĕ çĕклесе пађĕ... Ашшĕ каллех шăтăка хуђĕ. Унтан тата, тата...

Ђылайах пăхса тăраттăм пулĕ те, Паљља мана ураран туртрĕ. Ураран туртрĕ те, хăй пĕр сăмах каламасăрах çырма тĕпнелле ђăмрĕ. Епĕ те—хыççăн...

— Ну, мĕнле?—ыйтрĕ вăл манран çырма тĕпĕнђе.

— Мĕн мĕнле?

— Куртăн-и?

— Куртăм.

— А мĕн куртăн?

— Тырă пытараççĕ...

— Тĕрĕс, тырă пытараççĕ, шуйттансем!

Паҫҫа вăщтах сиксе пĕр пысăк ҫул ҫине утланса ларҫĕ.

— Астăватăн-и, Йăван,—терĕ вăл,—Шупашкартан килни мĕн каларĕ: „Кулаксем вĕсем хăйсен тыррисене патшалăха парасшăн мар, пытараççĕ“, терĕ...

— Астăватăп,—терĕм епĕ,—вăл тата „кулаксем тырă пытарнипе кĕрешмелле“, тесе хăварҫĕ...

— Епĕ ун ҫинҫен лосăнк та ҫыртăм вĕт... Ну, мĕн тăвар ĕнтĕ хаҫ?

— Пĕлтерес пулаť кун ҫинҫен...

— Кама пĕлтерес?

Епĕ кăштах шухăшласа тăтăм та, астуса илтĕм хамăн атте турпул хатĕрлекен комиççире тăнине.

— Манăн аттене!—терĕм Паҫҫана.—Вăл ҫлен Аťа...

Хăрасси-каҫку, ҫăва патне! Вăл самантра пирĕн умма ҫитмĕл ҫиҫĕ Йалампи карҫăк сиксе тухсан та хăрас ҫукҫĕ пуҫ епĕр. Ҫырма тăрăх ҫупса антăмăр та, урамалла хăпаракан сукмак патне ҫитсен, алăран-алла тытса пирĕн паталла пĕрхĕнтертĕмĕр кăна...

Атте анҫах килеҫитсе тăнă мĕн. Епĕр ҫупса кĕнĕ ҫух урине салтса ларарҫҫĕ.

— Атте!—терĕм ун патне ҫупса пырса,—(хам хăшкатăп, нийепле те сывлăш ҫавăрса илейместĕп...)—Атте, ҫырмара...

„Атте“ тесенех, атте тăрук пуҫне ҫĕклерĕ те, Паҫҫапа икҫĕмĕр ҫине пăха-пăха илҫĕ.

— Мĕн „ҫырмара“? Мĕн пулнă? Ăҫта ҫӳрерĕр есĕр ҫĕр хута?—терĕ вăл хыттăн.

— Епӗр Ентри пиђђе патне лосӑнксем пама кайрӑмӑр та...—ђыхӑна-ђыхӑна каласа кӑтартма пуҫларӗ Паљља,—кайалла килме тухса Йӑванпа тавлашрӑмӑр...

Атте Паљљана ӑналанайманнине кура епӗ ђасрах хам калама тытӑнтӑм.

— Ҫырмапа килтӗмӗр те... тура ҫутӑ куртӑмӑр... кайса пӑхрӑмӑр... Пуйан Љавасем... мӗн... ҫав... мӗн...

— Мӗн тӑваҫҫӗ?—ђӑтаймарӗ атте.

— Тырӑ пытараҫҫӗ!—персе йађӗ мантан малтан Паљља.

Атте алинђи ҫӑпатине ҫӗре лађ! пӑрахрӗ.

— Аҫта?

— Хӑйсен мунђинђе...

— Хаљ кӑна куртӑмӑр..

— Куртӑмӑр та, ђупса килтӗмӗр...

Атте пирӗнпе урӑх нимӗн те калаҫмарӗ. Ыйтасса та урӑх нимӗн те ыйтмарӗ. Сак ҫине ларса, салтнӑ урине хӑвӑрт сырма тапратрӗ. Ҫавнашкалах хӑвӑрттӑн пиншакпа карттусне тӑхӑнђӗ те, пӳртрен тухса кайрӗ.

Епӗ ун хыҫҫӑн ҫелнӗке ђупса тухса:

— Ӑҫта кайатӑн, атте,—тесе ыйтрӑм, анђах вӑл нимӗн те ђӗнмерӗ.

Паљљапа иксӗмӗр нимӗн тума та пӗлмерӗмӗр пӗр тапхӑр. Ҫурҫӗр иртсе кайнӑ пулин те, ҫывӑрас тӑвас пирки шухӑш та ҫук. Каккуй ҫывӑрмалли! Ђӗресем темӗскер пек тапаҫҫӗ...

— Йалсоветне кайрӗ пуљ вӑл,—терӗ Паљља кӑшт тӑркаласан.—Унтан вара Љавасем патне кайаҫҫӗ пуљ. Аҭа епӗр те вӗсем хыҫҫӑнах кайатпӑр. Рас епӗр тупрӑмӑр, а хамӑр каймасӑрах йулатпӑр... Ытла, вӗсем йамӑтласа панине...

— Йурĕ, ытлашши ан вĕре, аннене вăрататăн,—терĕм епĕ ђăнах та ытлашши вĕресе кайнă Паљђана.—Аŧа еппин, хыççăнах кайăпăр.

— Аŧа!

Епĕр çелнĕке тухсан, пўртрен анне темĕскер кăшкăрђĕ, мана йарасшăн марђђĕ пулмалла, анђах епĕр урамалла тухса ыткăнтăмăр.

Çитрĕмĕр йалсоветне. Тĕттĕм. Никам та çук иккен. Кунтан тўрех претçетаттĕл патнелле ђупрумăр. Пуртре—лампă çунаŧ...

...Претçетаттĕл пўртĕнђен икĕ çын тухрĕç. Пире ан курђăр тесе, епĕр пĕр каска хыçне пытантăмăр.

— Аŧа, малтан Шăнкăрђ патне кĕрсе тухăпăр, унтан Шикалăв патне кĕрĕпĕр,—терĕ вĕсенђен пĕри хулăм сасăпа.

Епĕ йалсовет претçетаттĕлĕн сассине палларăм.

— Комсомол çекреттарĕ патне кайаççĕ,—терĕ Паљђа мана хăлхаран.—Шăнкăрђа халĕ комсомол çекреттарĕ тунă вĕт.

— Шикалăвĕ тата кам вăл?

— Вăл хуларан килнĕскер... тырă хатĕрлес ĕçпе килнĕ...

Пире асăрхасран епĕр хытă сыхланса пыратпăр. Йăмрасем, урамри каскасем хыçĕсемпе пĕшкĕнкелесе пыратпăр. Кам пĕлет вĕсене: курсан—кайалла та хăваласа йарĕç...

Шăнкăрђпа хула çыннине вăратса тухсан, вĕсем урăх ниçта та кĕмерĕç. Мăклă Йакурсен кĕлеђĕ çуммипе карта урлă каçрĕç те, пахђасем урлă Пуйан Љђава картишнелле утрĕç.

Епĕр те йулмастпăр. Çатан картасем урлă çăтăр-çатăр каçатпăр та, пĕр тапхăр лăпђăнса ларатпăр. Унтан каллех утатпăр.,.

Акă ĕнтĕ—аттесем йулашки карта урлă каçса Пуйан Лђава пахђине кĕђĕç. Пĕр-пĕринпе темĕскер пăшăлтаткаласа илђĕç пулас та, карта çуммипе анаталла утрĕç.

Пуйан Лђаван пахђи çырманалла авăнса анаť. Мунђи çырма хĕрĕнђех лараť. Мунђа патнелле çывхарсан, епĕр пĕр улмуççи хыçне йăпшăнтăмăр. Мунђа кунтан аван курăнаť. Мунђинђе пĕђĕкçеç çутă пур...

Ђылайђђен пĕр сас-ђĕвĕ те пулмарĕ. Пахђари йăвăççсем çеç çилпе кашласа лараççĕ.

Аттесем таçта çухалђĕç. Епĕр куç илмесĕр мунђа çине пăхса выртатпăр. Тăрук мунђа çелнĕкĕн алăкĕ йар-р уçăлса кайрĕ те, алăкра мĕлкĕсем курăнђĕç. Епĕр сиксе тăтăмăр та, мунђа патнелле ђупса кайрăмăр...

Ђупса çитсен, çакна куртăмăр...

Пуйан Лђава аллине пуртă тытнă та, хытнă пек тăраť. Çумĕнђе—ывăлĕ. Вăл çĕрелле пăхаť... Вĕсем мунђа çелнĕкĕн урайĕ айне пĕтĕмпех тырă михĕсем тултарса, урайне çĕнĕрен сарма тытăннă мĕн.

— Ывăлупа иксĕре те арĕслетĕп,—терĕ хула çынни хыттăн.—Тырри патне халех хурал тăрататăп...

Лђава куçĕсене тискер кайăк пек çутăлтарса, тăрук пурттине çӳлелле çĕклерĕ.

— Касатă-ăп!..

Анђах хула çынни çав самантрах вуљвер кăларса унăн сăмси патне тытрĕ...

Лђава пурттине лаштах пăрахрĕ.

— Шаком марш! — терĕ йалсовет претçетаттĕлĕ, Лђавапа ывăлне алăк çинелле кăтартса.

— Атăр йалсоветне!

Виçĕ кунтан пирĕн йалтан хулана утмăл лавлă хĕрлĕ опос тухса кайрĕ. Вĕсенђен ултă лавĕ епĕр Паљљапа иксĕмĕр тупса панă тырă пулнă.

Тепĕр вунă кунтан пирĕн отрета тырă хатĕрлес кампанире аван ĕçленĕшĕн хаçатра хĕрлĕ хăма çине кĕртнĕђђĕ.

## ЙУЛАШКИ ЙУМАХ.

Хуларан вĕсем кăнтăрла иртсен тин тухрĕç. Сăрă шывĕ урлă каçса Хурăнлă çул çине тухсан, Павăл Пеҭкă хулпуççийĕ çинђи кĕнекесемпе тултарнă кутамккана хăй илсе çакрĕ.

— Хам çĕклесе пырам-ха,—терĕ вăл,—хăвăртрах утар, атту каçђен киле çитеймĕпĕр тата...

Пеҭкă хирĕçмерĕ. Павăл унтан ђылайах аслă пулин те вĕсем пĕр-пĕринпе питĕ туслă. Тӳррипе каласан, пĕр шухăшлă пулмалла та ĕнтĕ вĕсен. Павăл—отрет вошаттăйĕ, Пеҭкăна нумай пулмасҭ унăн помошнĕкĕ тунă.

Хулара вĕсем икĕ кун хушши пионер вошаттăйсен канашлăвĕнђе пулнă. Пеҭкă кунашкал канашлусенђе халђђен нихăçан та пулман, çавăнпа та унта мĕн-мĕн калаçнине питĕ тăрăшса итлерĕ. Пĕр сăмахне те хăлха тĕлĕпе ахаљ ирттерсе йамарĕ.

— Ăна тумалла, кăна тумалла... Пионерсен пĕр ĕçрен те пăрăнса йумалла мар...

Пысăк шухăша йађĕç Пеҭкăна канашлура каланисем. Унăн пĕђĕк пуçĕнђе—çĕр тĕслĕ шухăш.

— Ĕç нумай... Сљот наккасĕсене пурнăçа кĕртмелле. Шел, Павăл вĕренме кайаҭ. Е-ех, вăл каймасан, ĕçлĕттĕмĕрђђĕ пĕрре! Пĕр наккасне те пурнăçа кĕртмесĕр хăвармăттăмăр!..

...Хурăнлă çулĕ вĕçĕмсĕр тăсăлаҭ. Таçтан, инçетрен, инçете... Çул хĕррипе телекраф йуписем салтаксем пек тăрса тухнă. Йĕри тавралла пăхсан—пĕлĕтпе çĕр пĕрлешнĕ пек курăннă çĕре çи-

тиҫҫенех темле йалсем, ула уйсем, ҫил арманӗсем, ҫырма-ҫатрасем курӑнаҫҫӗ...

* *
*

— Пеҫкка, есӗ пӗлетӗн-и,—терӗ Павӑл пӗр ҫырма тӗлӗпе иртсе кайсан.—Ҫак Хурӑнлӑ ҫул ҫинҫен темӗн те пӗр каласа кӑтартаҫҫӗ...

— Илтмен, — терӗ Пеҫкӑ, Павӑл йеннелле ҫавӑрӑнса.—Мӗн вара?

— Ҫак ҫул ҫинҫе ӗлӗк пит хӑрушӑ пулнӑ, теҫҫӗ. Темӗнле пуйан хуҫасене ҫакӑнта вӑрӑ-хурахсем нумай ҫаратнӑ тет.

— Ӑҫта кайакансkерсене?

— Ҫак ҫулпа Атӑл йеннелле кайнӑ тет вӗсем.

Пеҫкӑн малтанхи шухӑшӗсем таҫта тарса ҫухалҫӗҫ. Вӑл Павӑлтан татах ыйтса пӗлме пуҫларӗ.

— Тата мӗн пулнӑ тет?

— Тата... Хӑш ҫухне ҫак ҫулпа хӗвелтухӑҫ йеннелле ҫӗршерӗн-ҫӗршерӗн сӑнҫӑрланӑ ристансене хӑваласа кайнӑ тет...

— Ӑҫта илсе кайнӑ вӗсене? Ма?

— Ҫӗпӗре... Патша пусмӑрне хирӗҫ тӑнӑшӑн, Нумайӗшӗ, ывӑнса ҫитнипе, ҫакӑнтах ӳке-ӳке вилнӗ тет. Вӗсене вара ҫул ҫинҫех шӑтӑк алтса пытарса хӑварнӑ, тет. Хамӑр йал тӗлӗнҫе, авӑ, „Ристан варӗ“ пур-ха вӗт? Ҫавӑнта пӗр тӑрук темиҫе ҫынна пытарнӑ, теҫҫӗ ваттисем.

Пеҫкӑна ҫав карттин куҫ умнех тухса тӑнӑ пек туйӑнаҫ... Нумайӑн, пит те нумайӑн утаҫҫӗ вӗсем. Тусанлӑ, пылҫӑклӑ, ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирсемпе... Урисенҫе пурин те сӑнҫӑр... Хӑшӗсен урисем сӑнҫӑрпа шӑйӑрӑлса пӗтнӗ. Хыҫалтан кукӑр уссиллӗ,, мӑнтӑркка шантарсем хӑваласа пыраҫҫӗ, Пӗлтӗр йалта „Стаҫкӑ“ йатлӑ кино карттинӑ кӑтартнӑҫҫӗ. Ҫав тери киҫем...



— Ес курман-и вара кун пеккине нихӑҫан та.

...Пĕртак утсан, Павăл каллех сăмах хускатса йаҫҫĕ.

— Илтнĕ-и тата есĕ... Ҫакăн пеккисене те нумай каласа кăтартаҫҫĕ. Ҫак ҫул ҫинҫе киреметсем, тухатмăшсем, арҫурисем пит ашкăннă, теҫҫĕ... Хăйсене килĕшменнисене ҫасах тыта-тыта тирпейленĕ тет вĕсем. Сан шутупа мĕнле, тĕрĕсши вăл?

Петкка мăн ҫын пекех аллине сулҫĕ. Сисрĕ вăл: Павăл кăна кулса ҫеҫ ыйтрĕ.

— Но-о, пустуй вăл...Ĕненместĕп.

— Ма ĕненместĕн?

— Ес мана кам вырăнне хуратăн? Карҫăксем шухăшласа кăларнă мĕн пур йапаласене те ĕненме ухмах мар вĕт епĕ!

* * *

Калаҫса пынă май йулташсем сисмерĕҫ те— утмалли нумайах та йулман. Ҫул хĕрринҫех ларакан „13“ ҫыхвăрлă йупа тĕлне ҫитсе тухса, ансăр ҫулпа лупашканаллла анҫĕҫ. Текех хурăнлă ҫулпа утмалла мар ĕнтĕ вĕсен.

Лупашкапа кăштах утсан, Павăл ҫарăнса йĕри тавралла пăхкаларĕ.

— Петкă, тавай ларса канатпăр. Ав ҫавăнта, сăртри йумансем айне. Киле ҫитесси те пĕр виҫĕ ҫухрăм ҫеҫ те, ҫапах... ларар-ха.

Петкă килĕшрĕ. Павăл хăйĕн пиншакне ҫĕре сарса пăрахрĕ та, вĕсем выртрĕҫ.

Йумансем айĕнҫе пĕр вунă минута йахăн хулара илнĕ кĕнекесемпе шурналсене пăхкаласа выртнă хыҫҫăн, Петкă тăҫĕ. Темшĕн, тек выртас килмерĕ унăн. Каҫ та пулса килет ĕнтĕ... Темрен, вăл йуман кăкĕсем ҫине пăхса илҫĕ.

— ??

— Павăл, пăх-ха! Укҫа выртаť! — кăшкăрса йаҁё вăл сасартăк. — Павăл тетĕп, пăх-ха! Темĕн ҁухлё! Е-ей, мĕн ку? Пăх-ха, пуканесем!.. Сахăр... Ҫăмарта! Кил-ха!

Пеťкă пит те хавасланса ҁĕннипе, Павăл сиксе тăҁё.

— Ее-е, — терĕ вăл кулса. — Ара, киремет тавраше вĕт ку! Ес курман-и вара кун пеккине нихăҫан та?

— Ҫук, курман. А кам килсе тăкнă ăна кунта?

— Кам пĕлет, такам... Ухвар карҁăкĕ пеккисем пуљ. Ҫавсем пит те пĕр канашлă пурăнаҫҫĕ тет киреметсемпе. Такама тухатнă ĕнтĕ...

— Ха-ха-ха...

Пеťкă киремет хатĕрĕсене тапса аркатрĕ.

— Ну, кулăш та ҫав... Пăх-ха, пуканисене мĕн манерлĕ тунă: саппунлă, сурпан-масмаклă...

— Ха-ха-ха!

Павăл та ҫемҫен кулса илҁĕ.

— Ахаљрен мар вĕт ҫак вырăна „Киремет лупашки“ теҫҫĕ. Ĕненекенсем пур-ха ҫак йапалана ваттисем хушшинҁе. Ак ҫак йумансем те никама усăсăр, анҁах „киремет йуманĕсем“ тесе — касмаҫҫĕ вĕсене.. Тахҫанах касмалла...

...Кайран вара вĕсем йал хушшине ҫитиҁҁенех киреметсемпе тухатмăшсем ҫинҁен калаҫса пыҁĕҫ.

— Аҁасем хушшинҁе те ĕненекенсем нумайха вĕт ҫавсене, — терĕ Пеťкă, хăйсен урамнелле пăрăннă ҁух.

— Пур ҫав... — терĕ Павăл. — Ашшĕ-амăшĕсем тем те пĕр каласа тултараҫҫĕ те, аҁисем ĕненеҫҫĕ вара. Анҁах пирĕн ăна йепле те пулин пĕтерес пулаť... Вăл сĕрĕме пĕтермелле. Сăмахпа

калани сахал, пĕрпĕр ĕçпе кăтартас пулаť çав киреметсемпе тухатмăшсем суйа сăмах çеç иккенне.

— А мĕнле тăвас-ха ăна?

— Мĕнле тăвассине епĕ хађ тăруках калама пултараймастăп та... çапах, йепле те пулин тăвас пулаť...

* * *

Урамсенђи, карташсенђи йăвăççулçисем саралђĕç. Анкартисенђе тăпаç сассисем илтĕнмеççĕ — авăн çапса пĕтернĕ.

Павăл Шупашкара вĕренме кайрĕ. Вăл тухса кайиђђенех комсомол йађейккин пӳрĕвĕ Пеťкăна вошаттăй тума йышăнђĕ.

— Ађасем пушă ĕнтĕ, килти ĕçсем пĕтнĕ... Пуçлас пулаť отретра ĕçлеме, терĕ уђиттĕл, йађейккă секреттарĕ.

Тепĕр куннех Пеťкă отрет советђĕн ларăвĕ туса ирттерђĕ. Унтан мĕн пур пионерсен пухăвĕ туса, пионерсен халех мĕн-мĕн ĕçлемелли çинђен теплĕн каласа кăтартрĕ. Нумай каларĕ. Йулашкинђен çакнашкал хаваслантаракан сăмахсемпе пĕтерђĕ.

— Параппан çапса, йурăсем йурласа çӳрени çителĕклĕ мар вăл.,. Пирĕн, пĕђĕк паттăрсен, пур ĕçре те мăннисене пулăшса пымалла. Хађхи вăхăтра çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте вирлĕн ĕçлекенсем кăна пионер йатне илтме пултараççĕ. Илтрĕр-и?

— Илтрĕмĕр, — терĕç пионерсем.

— Илтрĕр пулсан, хăвăрăн шухăшăрсене калăр еппин!

Отрет пĕр сасăпах йышăнђĕ: „Колхос тăвас. Сайккасем, тата ăратлă ђăхăсем туйанса ĕрђетме тытăнас. Унтан — отрет вăйĕпе хут пĕлменнисене вунпилĕк çынна вĕрентес. Çуркунне шкул пах-

ҫинҫе кӑтартуллӑ пахҫа тӑвас. Хаҫат-шурналсем сарас. Кампанисем ирттернӗ вӑхӑтра прикатӑсем туса ӗҫлес. Каруйӗнҫи отрета ӑмӑртса ӗҫлеме ҫӗнес...“

— Тӑватпӑр, тӑватпӑр!—терӗҫ ӑҫасем.

* *
*

...„Тӑватпӑр“ теме аван та вӑл, ӗҫ сӑмахпа каланипех пулмасӗ ҫав. Ӗҫсене тума тытӑнсанах умма ҫӑрмавсем нумай сиксе тухрӗҫ.

Пуху хыҫҫӑн киле ҫитсенех Пӗӗкӑ шухӑша кайрӗ.

— Ку ӗҫсене тума укҫа нумай кирлӗ вӗт-ха... Укҫа ӑҫтан тупас? Сахалтан та пӗр хӗрӗх тенкӗ кирлӗ... Аҫтан, ӑҫтан тупас укҫа?

Ку ыйту Пеӗкӑ пуҫне каҫҫен, унтан тепӗр кунне те кунӗпех ҫӗмӗрес пек пӑтратрӗ.

— Ытти йалсенҫе копперативсем пионерсене шефа илеҫҫӗ. Пирӗн вӑл ҫук. Отретпа ӗҫлесе тупас тесен, хаҕ нимӗнле ӗҫ те тупас ҫук. Ӑҫтан тупас-ха укҫа, ӑҫтан? Ҫӑтаймарӗ, тунтикун шкулта вӗрентмен кун пулин те шкула кайса уҫиттӗлпе калаҫса пӑхрӗ. Вӑл та нимӗнле канаш та параймарӗ. Йулташӗсем те ҫавнашкалах...

Ерне майлӑ анратрӗ ку ыйту пионерсене.

Нимӗн те шухӑшласа кӑлараймарӗҫ. Уҫиттӗл канаш панипе пӗр икӗ кун хушши ҫӳрерӗҫ аҫасем килӗрен киле ирӗклӗн укҫа пухса. Анҫах виҫӗ тенке йахӑн аран-аран пухӑнҫӗ. Кунпа нимӗн тумаллийех те ҫук. Сахал...

Аптрарӗҫ.

Мӗн тӑвас? Укҫа ӑҫтан тупас?

Никам та нимӗн те шухӑшласа кӑлараймасӗ...

Пӗрре вара...

Пĕрре, шкултан таварăнсан, Петкă пĕҫĕк вит репе урамри ҫăла шыв ăсма тухрĕ. Ҫăл патĕнҫе кўршĕ хĕрарăмĕ те шыв ăсса тăрат.

— Пăх-ха, лешĕ вăрман касса килет,—терĕ вăл Петкăна, анаталла кăтартса. — Аран тапаланат...

Петкă пăхрĕ. Ҫăнах, анатран Уксак Маркка, йал хуралҫи, пĕр ҫыхă хăрăк туратсем ҫĕклесе хăпарат.

— Аҫта тупрăн ку икерҫĕ вуттине, -ыйтрĕ хĕрарăм, вăл ҫăл тĕлнелле ҫитсен.—Е? Маркка пиҫҫе!

— Тупатăп епĕ,—терĕ лешĕ,—хуллен кăштăртатса ҫўресех ҫупатăп. Киремет лупашкинҫи йумансене иртрĕм. Ахалех сайа кайаҫҫĕ вĕт. Кама кирлĕ вăл? Мана—пырат...

„Киремет лупашки“ тенине илтсен Петкă пĕркунне унта Павăлпа выртнине тăруках аса илҫĕ. Пуҫне темĕнле шухăш пырса кĕҫĕ...

Унтан тăрук сăнĕ улшăннă пек пулҫĕ унăн. Куҫĕсем йăлтăрах ҫутăлҫĕҫ. Тути илемлĕн кулса илҫĕ. Йăпăр-йапăр шыв ăсса пўрте кĕртсе лартрĕ те, сăкманне ҫакса йарса сиккипе шкулалла вĕҫтерҫĕ.

Уҫиттĕл, аҫасен тетраҫĕсене вуласа ларакансkер, хăйĕн пўлĕмне Петкă такамран тарнă пек ҫупса пырса кĕнипе картах сикрĕ.

Петкă хашкат, хăй ҫунтан уҫиттĕл ҫине пăхат, темĕскер каласшăн...

— Мĕн пулнă сана?—ыйтрĕ уҫиттĕл.

— Тупрăм!—персе йаҫĕ Петкă.

— Мĕн тупрăн?

— Укҫа тупмалли май... Укҫа ҫителĕклех пулат пирĕн... Пулат!

— Мĕнле?

— От... Отрет... Отретпа пухӑнса Киремет лупашкинҫи йумансене кайса касатпӑрта, укҫа тӑватпӑр .. Вӗ... Вӗсем никама усӑсӑр лараҫҫӗ унта ҫавах... Ав, Уксак Марккасем тураттисене сӗтӗреҫҫӗ... Такки пулатӗ пирӗн укҫа... укҫа... Пулатӗ!.. Укҫа пулсан вара сайкка та, ҫӑхӑсем те, хута вӗрентесси те.. пурте пулатӗ!

Уҫиттӗл малтан пӗр тапхӑр Петӗкӑ ҫине тӑй-й... пӑхса тӑҫӗ. Унтан Петӗкӑна хӑйӗн патнелле туртса илҫӗ те, пуҫӗнҫен шӑлса илҫӗ.

— Маттур ес, Петӗкӑ. Ей-ей маттур!.. Ӑҫтан шухтшласа тупрӑн есӗ ку йапалана?

Петӗкӑ каласа кӑтартрӗ.

— Аван, мур илешши, пит аван,—терӗ уҫитлӗ.—Ҫаплах тӑвас пулатӗ.

* *
*

... Петӗкӑ ҫунатланҫӗ. Ниҫта ларас та, тӑрас та килмест унӑн.

— Пулатӗ!

Ҫав каҫах отрет советҫӗн ларӑвӗ туса ирттерҫӗ. Мӗн тусан мӗн пулмалли ҫинҫен каласа кӑтартнӑ хыҫҫӑн, совет Петӗкӑ шухӑшӗсене хавaслӑнах йышӑнҫӗ.

Ирхине, уроксем пуҫланас умӗн, васкавӑрлӑ пуху ирттермелле турӗҫ. Кунта каллех Петӗкӑ каларӗ.

Анҫах ..ҫул ҫинҫи тухмахсем пӗтмен мӗн-ха. Хыҫалти ӗретсенҫе ларакан аҫасенҫен пӗри тӑҫӗ те:

— Каймастпӑр вӑл йумансене касма!—тесе лаплаттарҫӗ.

— Йурамастӗ!—терӗ тепри.

— Мӗншӗн?—тӗлӗнҫӗ Петӗкӑ.

— Йуратӗ пулсан ку таранҫҫен йал сыннисем вӗсене тахҫанах касмалла...

— Мĕн, алăсăр-урасăр пулса ларас тетĕр-и вăл Киремет йуманĕсене касса?
— Мĕнле апла?
— Киремет тытаĭ!..
— Ан супĕлтет!
— Ђăн калаççĕ сана, супĕлтетсе мар. Курăр акă...
— Иртнĕ çуркунне Хура Тимухха пĕр-ик туратне каснипех урасăр пулса ларђĕ вĕт!
— Пустуй йумах!
— Курăр-ха акă...
Вĕлле хурђĕсем пек сĕрлесе кайрĕç пионерсем. Kaçхине отрет советĕнђе йумансене касма йышăнни çинђен йал тăрăх хыпăр саланма ĕлкĕрнĕ те, ађасенђен нумайĕшне ашшĕ-ăмашĕсем хăратса пĕтернĕ. Çавăнпа та хаљ ађасенђен çуррине йахăн хирĕç тăђĕç...
Пеĭкă тинех кĕркунне Павăлпа калаçнине астуса илђĕ.
„Ашшĕ-амăшĕсем тем те пĕр каласа пĕтереççĕ те ађасем ĕненеççĕ вара. Анђах пирĕн ăна йепле, те пулин пĕтерес пулаĭ. Вăл сĕрĕме пĕтермеллех. Сăмахпа кăна мар, пĕр-пĕр ĕçпе кăтартса парас пулаĭ сав киреметсемпе тухатмăшсем суйа сăмах çеç иккенне..."
Пукан çине сиксе тăђĕ те, хыттăн кăшкăрма тытăнђĕ Пеĭкă:
— Ађасем! Невушлĕ вара есĕр ђăнахах ĕнетĕр киремет çинђен каласа кăтартакан йумахсене? Киремеђĕ те, тухатмăшĕ кађки те—пĕтĕмпех пустуй йапапала вĕт вăл! Йумах!
— Тĕрĕс!—кăшкăрђĕ тахшин.
— Тĕрĕс мар!—терĕ тепри.
— Курăпăр унта,—терĕ малалла Пеĭкă, калаçнă май вĕриленсех пырса.—Çав йумансене

каснӑшӑн никама та нимӗн те пулма пултараймасҭ...

Темӗн ҭерлӗ калаҫсан та, пурне те ӑнлантарма пулмарӗ. Ытла та хытӑ ӗнентернӗ пулнӑ иккен килтисем. Уҭиттӗл калани те пулӑшаймарӗ...

— Йулашки хут сасӑлатӑп,—кӑшкӑрҭӗ Пеҭкӑ.—Отрет ваљљи укҫа тума киремет лупашкинҭи йумансене кам касас тет? Шутлатӑп: виҫҫӗ, ҫиҭҭӗ, вуннӑ, вунулттӑ... Ҫирӗм. Хаљ тата—кам кӑна хирӗҫ? Вунҫиҭҭӗ!

Каллех сӗрлесе кайрӗ пуху...

— Ыран ирхинех кайатпӑ-ӑр!

— Касатпӑр!

— Хӑтланӑрах-ха!..

— Нимӗн те пулмасҭ!

— Пулмӗ вӑт!...

— Курӑр-ха!

...Каҫхине уҭиттӗл пӳлӗмӗнҭе комсомол йаҭейккин пӳро ларавӗ пулҭӗ. Пеҭкӑн каллех каласа кӑтартмалла пулҭӗ кунта отрет мӗн тума шухӑшлани ҫинҭен. Комсомолӗссем вӑл шухӑша ырларӗҫ те, хӑйсен протокколӗ ҫине ҫапла ҫырса хуҭӗҫ:

„Пионерсене ку ӗҫре пулӑшас“...

Ирхи апат вӑхӑҭӗ. Пайан шкулта вӗрентмелле мар кун, анҭах шкулта аҭа-пӑҭа туп-туллийех. Калаҫаҫҫӗ, кулаҫҫӗ, шавлаҫҫӗ...

Шкул умӗнҭе кӳлнӗ лашасем тӑраҫҫӗ. Урапасем ҫинҭе пӑҭӑкӑ, пуртӑ, рыҭак. Пайан пионер отреҭӗ киремет йуманӗсене касма кайаҭ.

Шкултан уҭиттӗлпе пӗрле виҫӗ комсомолӗс тухрӗҫ. Вӗсем пионерсене пулӑшма пыраҫҫӗ, вӗсене йаҭейккӑ пӳровӗ пионерсене пулӑшма хушнӑ.

— Ну, кайатпӑр пулӗ,—терӗ уҭиттӗл, пӗр комсомолӗсӑн лаши патнелле пырса.



— Е-ей, йара па-ар!

— Тавай, кайас...—кăшкăрҗĕ урапа çине хăпарса тăнă Пеҭкă. Лашине пушăпа пĕрре туртса çапрĕ те, урам варнелле җуптарса тухрĕ. Ун хыççăн ыттисем те тапранса урам варринелле тухрĕç.

— Миçе лаша?—ыйтрĕ уҗиттĕл.

— Çиҗҗĕ!

— Çынсем миçен?

— Пĕтĕмпе вунулттăн!—кăшкăрҗĕ Пеҭкă.

— Тăвата аҗана ашшĕсем йаман... Но-о, уткала! Тапранса кайрĕç...

Пеҭкă урапи çинҗе тăвата пионер лараҭ.

— Тавай, йурă пуçлар,—терĕ пĕри.

— Тавай!

— А мĕн йурлăпăр?

— Кирек те мĕн...

Пеҭкă урапи çинҗе ларакансенҗен пĕри йурă пуçларĕ те, ыттисем те йурлама пуçларĕç...

Вдоль да по бережку,
Бережку крутому...
Сергей поп презлой идет...
Сергей поп, Сергей поп,
Сергей дьякон и дьячок...

Йанраҭ йурă, җупаççĕ лашасем...

Акă вăл пионерсен хастарлăхĕ! Камăн җĕри җăтĕ хавассăн тапмасăр кăна курсан?..

...Çĕмĕрттерсе çитсе тăҗĕç укăлҗа хапхи патне.

— Ей, малтисем, хапха анса уçăр!—тесе кăшкăрҗĕç хыçалтисем.

— Йураҭ! Халех!..

— Çак вăхăтра, сасартăк... урлă урамран икĕ хĕрарăм җупса тухса тӳрех Пеҭкă лаши умне пырса тăҗĕç. Унҗҗен те пулмарĕ—вĕсем иккĕмĕш урапа çинҗе ларакан икĕ аҗана аллисенҗен туртса антарса, килелле сĕтĕрме тапратрĕç...

— Ăçта кайатăр, çĕр çăтманскерсем? Кам хушрĕ сире? Камран ыйтрăр?

— Вилĕм шырама кайатăр-и?

— Киреметрен мăшкăлаймăр!..

— Ут ҫасрах киле, анҫăк!

Пĕри Пеťкă çине кăшкăрма тытăнҫĕ:

— Есĕ аҫасене мĕншĕн мутťит тăватăн? Ах, антихрис ҫĕппи!

Пеťкăна ку хытă кўрентерҫĕ.

— Сана мĕн ĕç пирĕнпе? Пшол, ан тивнĕ пултăр пире!

— Ҫарăн,—терĕ уҫиттĕл Пеťкăна.—Вĕсемпе тавлашнинҫен усси пулас çук.

— Атăр, ҫуптарăр...

— Кайса касар ҫасрах! Вĕсен киремеҫĕн нимĕнле хăват та çуккине кăтартăпăр-ха! Е-ей, йара па-ар!..

* * *

Пайан пуçласа йур çунă. Çанталăк самайах сивĕ. Çурçĕр йенҫен витĕр шăтаракан çил вĕрет...

Шупашкар урамĕпе хĕрлĕ плошҫĕтрен совпартшкул патнелле утакан Павăла хăйпе пĕрле вĕренекен йулташĕ хăваласа çитрĕ.

— На, сана ваљљи çыру пур,—тесе, ăна вăл кăсйинҫен кăвак канверт кăларса тыттарҫĕ. Павăл çавăнтах канверта çурса, шалтан темĕн пысăккĕш хут листи туртса кăларҫĕ. Тўрех, вулама тытăниҫҫен хыçала пăхрĕ те, „Пеťкă" тенине курҫĕ.

Çыру Пеťкăран пулнă. Акă мĕн çырнă вăл:

— „Йуратнă Павăл пиҫҫе, мĕнле пурăнатăн есĕ, ма пĕр çыру та йамастăн ман пата. Ху çырмастăн пулин те, епĕ çырас терĕм.

„Ђи малтан акӑ мӗн ҫинђен пӗлтерем сана Есӗ вӗренме кайсанах мана вошаттӑй турӗҫ. Ӗҫлеме тытӑнтӑмӑр та—колхос тӑвас, сайккасем ӗрђетес, хут пӗлменнисене вӗрентес, каруйсемпе ӑмӑртса ӗҫлес терӗмӗр. Анђах пирӗн ҫул ҫинђе пысӑк ђӑрмав сиксе тухрӗ: укҫа ҫукки. Кун пирки епӗр шалт аптӑраса ҫитрӗмӗр, кайран вара шухӑшласа тупрӑмӑр...

„Хайхи киремет лупашкинђи йумансене касас тӗрӗмӗр, анђах ађасем нумайӗшӗ хӑрарӗҫ, мӗншӗн тесен ашшӗсем хӑратса пӗтернӗ вӗсене Ҫапах та, комсомолӗссем пулӑшнипе, вӑл йумансене пурне те касрӑмӑр та, пӗтӗмпе ултӑ ђалӑш вутӑ пулђӗ. Вуттине „киремет тытать“ тесе никам та илесшӗн марђђӗ, вара епӗр РӖК урлӑ ӑна хамӑр шкулах сутрӑмӑр. Йалта малтан питӗ хытӑ йатларӗҫ, пионерсене анттихрис ђӗпписем тесе пӗтерђӗҫ. Хаљ ӗнтӗ нимӗн те мар, ваттисен „хӑватлӑ“ сысна ҫӳри шухӑшне те тӑманни палӑрђӗ. Ваттисем те пире мухтама пуҫларӗҫ, вӑт шељмӑсем, киремете ҫӗнтерђӗҫ, киремет ђӑнах та такам шухӑшласа кӑларнӑ йумах ҫеҫ пулнӑ иккен, теҫҫӗ...

„Астӑватни, иксӗмӗр хуларан тавӑрӑннӑ ђух есӗ мана ҫапла каларӑн: „Ашшӗ-амӑшӗсем тем те пӗр каласа тултараҫҫӗ те, ађисем ӗненеҫҫӗ вара. Анђах пирӗн ӑна пӗтерес пулать... Вӑл сӗрӗме пӗтермеллех. Сӑмахпа каласа мар, пӗр-пӗр ӗҫпе кӑтартас пулать ҫав киреметсемпе тухатмӑшсем суйа сӑмах ҫеҫ иккенне...“ терӗн. Тӗрӗс каланӑ есӗ, питӗ тӗрӗс..,

„Ашшӗ-амӑшӗсем тем те пӗр каласа пӗтернипе хӑш-пӗр пионерсем те пымарӗҫ йумансене касма. Анђах епӗр кайса касрӑмӑр та, киреметӗн нимӗнле хӑват та ҫуккине кӑтартрӑмӑр. Хаљ ӗнтӗ

аҕасем пĕри те ĕненмеççĕ вăл йумаха. Йумахăн хăватне пĕтертĕмĕр.

„Укçа пире пĕтĕмпе 52 тенкĕ паҕĕç, питĕ хĕпĕртерĕмĕр. Хаљ вăл укçапа мĕн кирлисене туйантăмăр...

„Çапла вара, вăл йумансем пире икĕ тĕслĕ усă паҕĕç: пĕр йенҕен—суйа сăмахсене сиртĕмĕр, тепĕр йенҕен—укçа... Йепле пек, е?

„Сывпул. Хĕлле кил. Хаљ пирĕн пурнăç вĕрет кăна, ĕнсене хыçма та вăхăт çук. Пĕтĕм вăйа хурсах ĕçлетпĕр ĕнтĕ хаљ. Каруй пионерĕсем те пирĕнтен йуласшăн мар пулмалла. Ара, ăмăртса ĕçлетпĕр вĕт!

Пеťкă“

Павăл çырăва вуласа тухрĕ те, çинçен кулса йаҕĕ.

— Пăх-ха, мĕнле вĕсем... маттур...

Унтан Пеťкă патне—çыру, тата нумай пулмасť илсе хатĕрленĕ кĕнекесене йарас шутпа хăйĕн хваттернелле утрĕ.

# СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви

ПИОНЕРСЕМПЕ ШКУЛА ÇŸРЕКЕН АЂАСЕМ ВАЉЉИ КĂЛАРНĂ ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ:

БИАНКИ. Кайăк çурђĕсем.

Вĕçен кайăксем (аљпом).

НЕВЕРОВ. Пĕђĕк ађасем ваљљи çырнă калавсем.

ПЕРОВСКАЙА. Мишкă.

ПОЛОНСКАЙА. Ђасси.

ТАЛВИР. Хĕллехи сивĕре.

ДОРОХОВ. Пољшевик ывăлĕ.

АГАКОВ. Вăрманти отрет.

Кĕнеке илес текенсем укçа çак атрĕссенђен пĕринпе йарăр:

Москва, Центр, Никольская, 10.

ЦЕНТРИЗДАТ

Сектору книгораспространения.

Самара, Ленинградская, 36-38, отделению Центриздата.

Хакĕ 20 пус. Цена 20 коп.

Х. 2

На чувашском языке

Л. АГАКОВ. Последняя сказка

ЦЕНТРИЗДАТ НАРОДОВ СССР
Москва, центр, Никольская, 10.